**Налук инспекцийĕнчен пĕлтереççĕ**

# Таксисемпе таксистсем пирки

Районсем хушшинчи налук инспекцийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, 2009 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне «такси» ĕçĕ-хĕлĕ енĕпе 124 уйрăм предпринимателе регистрациленĕ. Çав вăхăт тĕлнех пассажирсене илсе çӳрекенсем тĕлĕшпе 75 тĕрĕслев иртнĕ. Оперативлă тĕрĕслев итогĕсем çавăн çинчен калаççĕ. Такси услугисем паракан 36 водителĕн предприниматель ĕçĕпе ĕçлеме ятарлă ирĕк пулман. Вĕсене пурне те уйрăм предпринимательсен учетне тăма предписани панă. Кунпа пĕрлех тĕрĕслевпе касса техникипе е çирĕп отчетлă бланксемпе усă курма 45 предписани пама тивнĕ.

Тĕрĕслевпе касса техникипе тата çирĕп отчетлă бланксемпе усă курманшăн 5 предпринимателе административлă майпа ответ тыттарнă, 15,5 пин тенкĕлĕх штраф панă. Кунпа пĕрлех уйрăм предприниматель патĕнче ĕç килĕшĕвĕпе вăй хуракан 2 водителе те ответ тыттарнă, 3 пин тенкĕ штраф тӳлемелле тунă.

Çулталăк пуçланнăранпа 41 уйрăм çынна официаллă майпа таксистра ĕçлеме регистрациленĕ. Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕпе пĕрле ирттернĕ рейд кăтартса панă тăрăх, хальлĕхе пассажирсене илсе çӳрекенсем хушшинче уйрăм предприниматель тесе регистрацие тăманнисем те пур-ха. Ку тĕлĕшпе административлă майпа правăна пăснăшăн 6 протокол çырнă. Тĕрĕслев материалĕсене айăплисене ответ тыттарма мировой судьясене ярса панă. Кун пек майпа правăна пăснăшăн 2 пин тенкĕ таран штраф пама пăхнă.

Федераллă налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи инспекцийĕ уйрăм предпринимательсене – таксистсене çавна аса илтерет: 2009 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнче 2009 çулхи 1-мĕш кварталшăн декларацисем тăратмалли вăхăт тухрĕ. Такси ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă уйрăм предпринимательсенчен чылайăшĕ хăйсен тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçларĕ, налук отчетлăхĕн докуменчĕсене вăхăтра тăратрĕ. Çав вăхăтрах отчет докуменчĕсене тăратманнисем те пур-ха. Вĕсене вăхăтра тăратмасан вара штраф тӳлеттерме пăхнă.

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе тата РФ Налук Кодексĕпе килĕшӳллĕн уйрăм предпринимательсем пурте налук декларацийĕсене палăртнă вăхăтра тăратма тата саккунпа пăхнă налуксене тӳлесе татма тивĕç. Предприниматель ĕçне тытăнас текенсен вара пурин те уйрăм предпринимателĕн патшалăх регистрацийĕн свидетельствине илмелле.

Уйрăм çыннăн предприниматель свидетельствине илес пулсан, налук органне çак документсене тăратмалла:

– Р 21001 формăллă нотариус çирĕплетнĕ заявлени («Заявление о государственной регистрации физического лица в качестве индивидуального предпринимателя»);

– уйрăм предпринимателе регистрациленĕшĕн 400 тенкĕ патшалăх пошлини тӳленин квитанцийĕ;

– паспорт копийĕ;

– учета тăратнин свидетельствин копийĕ.

Налук органĕ заявлени панăранпа 5 кун хушшинче уйрăм предпринимателе патшалăх регистрацине тăратни çинчен свидетельство парать.

**З. РУССКОВА,**
**налук инспекцийĕн тухса тĕрĕслевсем ирттерекен пайĕн пуçлăхĕ.**

**Ĕçре пултаруллисем**

# Пысăк награда – пысăк чыс



18 çул тултарнă хĕр ача – Çеменкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ Тамара Виссарионовна Волкова – Муркаш районĕн сучĕн алăкне уçни 30 çула яхăн ĕнтĕ. Çав вăхăтранпа унăн пурнăç çулĕ суд ĕçĕ-хĕлĕпе тачă çыхăннă. 29 çул ĕнтĕ вăл кунта вăй хурать. Коллективра ырă ятпа хисепе тивĕçнĕ вăл.

Унăн пархатарлă ĕçне шута илсе ĕнтĕ Муркаш район сучĕ Тамара Виссарионовна Волкован кандидатурине Раççей Федерацийĕн Аслă Сучĕ çумĕнчи Суд департаменчĕн ведомство наградине илме тăратнă. РФ Аслă Сучĕ çумĕнчи Суд департаменчĕн генеральнăй директорĕ А.В. Гусев нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕнче кăларнă хушупа вара Т.В. Волкована, халĕ судьяна пулăшакана, суд системинче нумай çул хушши тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн, хăйĕн ĕçĕнче суд çĕнĕлĕхĕсемпе анлăн усă курнăшăн, суд ĕçне-хĕлне аталантарма, çирĕплетсе пыма пулăшнăшăн «Суд системин хисеплĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парас тенĕ.

Çак хушупа паллаштарма, удостоверенипе кăкăр çине çакмалли знака алăран пама 2009 çулхи ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Республикин Аслă Сучĕ çумĕнчи Суд департаменчĕн пуçлăхĕ Валерьян Петрович Петров Муркаш район судне килсе кайрĕ. Вăл палăртнă тăрăх, кун пек пысăк наградăна тивĕçекенсем йышлах мар, чи пултаруллисене параççĕ ăна.

Эпир, Муркаш район судĕнче ĕçлекенсем, Тамара Виссарионовна Волкована çак пысăк наградăна тивĕçлĕ пулнишĕн чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр, малашне те ĕçре çавăн пек хастар, уçă чунлă пулма сĕнетпĕр, çирĕп сывлăхпа ăнăçусем сунатпăр.

**Муркаш район сучĕн коллективĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Т.В. Волкована пысăк наградăна панă вăхăтра.**

**Хатĕрлеме сĕнетпĕр**

## Çăкăр квасĕ

Хура çăкăртан тунă сухарие кастрюле хураççĕ, вĕрекен шыв ярса 3–4 сехет хушши хупласа лартаççĕ. Ун хыççăн тăрăлса ларнă шĕвеке сăрăхтарса илеççĕ те кăштах çĕпре, сахăр ярса таса салфеткăпа хупласа 5–6 сехетлĕхе йӳçме лартаççĕ. Квас кăпăкланма пуçласан кĕленчесене е банкăсене ярса пăкăлаççĕ. 2–3 кунлăха сивĕ çĕре лартаççĕ.

**Пенси илекенсене пĕлме**

# Уяв кунĕсенчи пенсисене – маларах

Пенси илсе тăракансенчен хăшĕсен пенси илмелли кун уяв кунĕсемпе пĕр килет. Çавна май РФ Пенси фончĕн уйрăмĕпе «Почта России» ФГУП филиалĕ килĕшсе татăлса кун пеккисене пенси памалли куна маларахри вăхăта куçарни çĕнĕлĕх мар. Кăçалхи май уйăхĕнчи уяв кунĕсенче те çавăн пекех пулать. Çавна валли пенси памалли ятарлă график çирĕплетнĕ.

2009 çулхи майăн 2-мĕшĕнче пенсисене майăн 3 тата 4-мĕшĕсенче илмеллисене параççĕ. Майăн 5-мĕшĕнче – çирĕплетнĕ графикпа килĕшӳллĕн.

Аслă Çĕнтерӳ кунĕ умĕн те çавăн пекех пулать. Майăн 6-мĕшĕнче пенсисене майăн 6, 7, 8 тата 9-мĕшĕсенче илмеллисене параççĕ, майăн 7-мĕшĕнче – майăн 7, 8, 9 тата 10-мĕшĕсенче илмеллисене, майăн 8-мĕшĕнче – майăн 8, 9, 10 тата 11-мĕшĕсенче илмеллисене. Майăн 12-мĕшĕнчен тытăнса пенсисене унчченхи графикпа килĕшӳллĕн пама тытăнаççĕ.

Перекет банкĕ вара майăн 2-мĕшĕнчен тытăнса майăн 5-мĕшĕччен илмелли пенсисене апрелĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа валеçĕ.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ.**

**Чăваш чĕлхин кунĕнчен**

# Чĕвĕлти чăваш чĕлхи

Илемлĕ те пуян чăваш чĕлхин уявне ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче – Аслă Вĕрентекенĕмĕр, чăваш халăхне çутта кăлараканĕ, пĕрремĕш чăваш шкулне йĕркелекенĕ, чăваш алфавичĕпе пĕрремĕш чăваш букварьне кăлараканĕ – Иван Яковлевич Яковлев çуралнă кунне халалласа 1992 çултанпа уявлатпăр.

И.Я. Яковлев, Тутар Республикине кĕрекен Пăва районĕнчи Кăнна Кушкинче 161 çул каялла çуралса ӳснĕ тăлăх ача, тăван халăх йăлийĕркине лайăх пĕлсе тăнă. Чăвашăн йывăр шăпи канăç паман ăна. Çавăнпа та пулĕ вăл тăван халăха, тăван




чĕлхене хисеплеме, юратма вĕрентессишĕн тăрăшнă. Халăха çутта кăларас ĕçе хăйĕн ĕмĕр тăршшĕпех хастар хутшăннă. Хăй ĕмĕрĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçса «Чăваш букварĕ», «Чăвашсене вырăсла вĕрентмелли пирвайхи вĕренӳ кĕнеки», «Букварь» хыççăн чăвашла вуламалли пĕрремĕш кĕнеке», ытти 17 кĕнекепе брошюра пичетлесе кăларнă. 39 çул хушши Турă кĕнекисене чăвашла куçарнă. 1906 çулччен вăл Çĕнĕ халалăн 12 кĕнекине кăларма пултарнă. Унăн калавĕсене паян кунччене кашни ача юратса вулать. Унăн ĕçне малалла тăсаканĕсем шутĕнче пирĕн ентешĕмĕрсем те сахал мар.

Чăваш чĕлхи кунне çулсерен анлăн уявласси Муркаш районĕнче те йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Кăçал та шкул ачисемпе вĕрентекенсем, библиотека тата клуб ĕçченĕсем Муркашри Культура çуртĕнче уява пухăнчĕç. Чăваш чĕлхи кунне халалласа районти библиотекăсем хушшинче «Чи ăста мультимедийлă кĕнеке куравĕ» конкурс иртрĕ. Конкурса пĕтĕмлетнĕ май малти вырăнсене А.А. Димитриева (Йӳçкасси), Л.В. Максимова (Атапай), З.И. Иванова (Чуманкасси) библиотекарьсем йышăнма пултарчĕç. Çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе парнесем парса чысларĕç.

Уява пухăннисем Муркашри тĕп библиотека чăваш чĕлхи кунне халалласа хатĕрленĕ тĕрлĕ презентацисемпе паллашрĕç. Муркаш шкулĕнче вĕренекенсем хатĕрленĕ «Савăнатăп эп чăваш пулнишĕн» литература композицийĕпе «Расна» халăх ансамблĕн юррисем куракансене чăннипех савăнтарчĕç.

Чăваш кĕнеке издательстви çулсерен çĕнĕ кĕнекесемпе савăнтарать вулакансене. Илемлĕ чăваш чĕлхипе çырнă капăр иллюстрациллĕ кĕнекесем куçа илĕртеççĕ, чуна тыткăнлаççĕ, вуламасăр майĕ çук. Уявра хăнара шăпах çав кĕнекесен авторĕсенчен пĕри - «Хресчен сасси» хаçатпа «Капкăн», «Тăван Атăл» журналсен тĕп редакторĕ, «Сĕлкĕш», «Тан таппи», «Авăр» кĕнекесен авторĕ тата Чăваш Республикинчи профессиллĕ писательсен правленийĕн председателĕ С.Л. Павлов пулчĕ. Кăçал «Литературная Чувашия» конкурсра унăн «Хаяр ытам» кĕнеки пĕрремĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ. С.Л. Павлов Муркашсене илемлĕ чăваш чĕлхипе вуласа киленмелĕх хăйĕн çĕнĕ кĕнекисене парнелесе хăварчĕ.

**Э. ДИМИТРИЕВА,**
**Муркашри тĕп библиотекăри инновациллĕ методика пайĕн ертӳçи.**

**Сăн ӳкерчĕкре: С.Л. Павловпа Ю.И. Ковалев – уяв хăнисем.**

# Тăван чĕлхене чысласа



Пирĕн шкулта ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче Чăваш чĕлхин кунĕ иртрĕ. Çак уява пурте хавассăн хутшăнчĕç. Мĕн-ши вăл чăваш чĕлхи? Чăвашсемшĕн вара вăл – никĕс. Мĕнле илемлĕ, мĕнле çепĕç, мĕнле янăравлă вăл чăваш чĕлхи!

Эпир те Чăваш чĕлхин кунне халалласа савăнăçлă уяв ирттертĕмĕр. Епле илемлĕ юрларĕç, епле хӳхĕм ташларĕç пирĕн пикесем. Сăввисене тата пĕри тепринчен уçăмлăрах шăрантарчĕç.

Пирĕн ĕмĕрĕпех мухтанмалла чăваш чĕлхипе, мĕншĕн тесен тĕнчипе çакăн пек илемлĕ те çепĕç чĕлхе çук.

Сцена çинчи артистсене залри куракансем тăвăллăн алă çупса саламларĕç. Виталий Енешĕн «Пăкăварить» сценки, пуçламăш классен фольклор ушкăнĕ, вăтам классен пысăк хорĕ – пурте вырăнлă пулчĕ çак уявра.

Пур шкул ачисем хушшинче ирттернĕ викторинăра Евгений Кулемин (11 класс) 1-мĕш вырăн, Снежанна Корпусова (10 класс) 2-мĕш вырăн, Николай Семенов (11 класс) 3-мĕш вырăн йышăнчĕç.

Ку савăнăçлă самант чылай хушă асра юлĕ.

**Галина ОСЕТРОВА,**
**Ильинка шкулĕнче 10-мĕш класра вĕренекен.**

**Юбилей**

# Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă чи çывăх çынна – Уйкас Апаш ялĕнче пурăнакан **Зоя Федоровна РЫЛИНАНА** майăн 1-мĕшĕнче 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Сывлăху сан çирĕп, кун-çулу вăрăм та телейлĕ пултăр. Эс пурришĕн эпир савăнатпăр, санпа хамăра телейлĕ туятпăр. Нумай çул хушши ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.**

Пирĕн хаклăран та хаклă юратнă пиччене – Анат Кăпас ялĕнче пурăнакан **Николай Васильевич ЧЕРНОВА** сумлă юбилейпа, майăн 1-мĕшĕнче 75 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Çĕньял Муркашра пурăнакан шăллĕн çемйи.**

Çавăн пекех Мулкачкассинче пурăнакан **Николай Дмитриевич ГАЛКИНА** та çуралнă кунĕпе саламлатăп. Сурпан пек вăрăм ĕмĕр, юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатăп.

**Салампа пĕрле ĕçленĕ тус-юлташĕ Чернов Владимир Петрович.**



Оринин ял тăрăхĕнчи Оринин ялĕнче çуралса ӳснĕ тата кунтах пурăнакан юратнă аннене, аппана, хуньамана, асаннене, кукамая – **Розита Гурьевна ГОРШКОВАНА** çурхи илемлĕ кун 80 çул тултарнă ятпа çепĕç çулçăсен калаçăвĕ пек, ăшă çил варкăшĕ евĕр, çывăх ĕшнери чĕвĕлти кайăксен çепĕç юрри майлă илемлĕ сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕç ĕмĕрне эсĕ Оринин ял Советĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухрăн. Çирĕп сывлăхпа та тулли кĕрекепе санăн 100 çулхи юбилейна та пĕрле уявламалла пултăрччĕ. Çавна валли сана сывлăх, тулăх пурнăç, ачусемпе мăнукусен тата прамăнукусен юратăвне, ял çыннисен килĕштерĕвне сунатпăр. Ĕмĕтленни çитсе пытăр!

**Саламлаканĕсем: йăмăкĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, прамăнукĕсем.**



Шомикри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта 27 çул ытла математика учителĕ пулса ĕçленĕ **Александр Петрович ПОРТНОВА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, вăй-хăват, мĕн ыррине кăна сунатпăр. Пурнăçу яланах ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Саламлаканĕ: Шомикри шкул коллективĕ.**